та хăйĕн Тăван çĕршывĕн чăн-чăн Гражданĕсен хăйсен пĕтĕм вăй-халне, хăйсен пĕтĕм талантне обществăпа усă курассишĕн çунса ĕçлекенсен ячĕ ĕмĕрлĕхех историе çырăнса юлать. Пирĕн, пурăнакансен, çав ятсене асра тытмалла, этем паттăрлăхне хисеплесе сума сумалла. Çакна пирĕн ачасемпе мăнуксем çеç мар, килес ăрусем те пĕлсе тăччĕр. Ялав, Элем, Ĕненӳ вырăнĕсене хурса çӳлте тытмалла çав ятсене. Хумханса пуç таймалла, вĕренсе пымалли тĕслĕх вырăнне хумалла.

*Н. Федоров,*

*Чăваш Республикин пĕрремĕш президенчĕ*

## ПЕТР ЕГОРОВИЧ ЕГОРОВ
## (1731–1789)



Архитектор, Çуллахи садăн питĕ паллă картин авторĕ, архитектурăпа вырăс классицизмне пуçарса яракансенчен пĕри.

XVIII ĕмĕр вĕçĕнче Санкт-Петербургра хута янă Çуллахи сад тĕнче искусствин питĕ паха ĕçĕ шутланать. Унăн «танлаштармалли çук» илемĕнчен тĕлĕнсе «тĕнчере пĕртен пĕр» тата генилле ĕç пулнине йышăнса, çурт-йĕр лартас ĕç историкĕсем пĕрре кăна мар çапла каланă: çав хӳхĕм карта кăна хăйĕн авторне питĕ чаплă ăстаçăн мухтавне пама пултарнă.

*«... çав пĕртен-пĕр сад,*

*Унăн тĕнчери чи паллă карти»*, – унăн тĕлĕнмелле çыпăçуллă илемĕпе хавхаланса, çапла сăвăланă Анна Ахматова.

Анчах та чаплă архитекторăн ентешĕсенчен хăшĕ те пулин шухăшламан та ĕнтĕ çакăн пирки, карта авторĕ кам пулнине, нумай çулсем хушши тавлашнă хыççăн, пирĕн вăхăтра çеç татса панă. Унăн пурнăçĕ çинчен сахал пĕлетпĕр, архив хучĕсен типĕ йĕркисем кăна сыхланса юлнă. Архитектура шкулне вĕренме кĕрсе, çапла çырнă Егоров: «Эпĕ чăваш çынни...». Кун çумне хăçан

çуралнине хушатпăр – 1731. Тен пĕр çакă кăна эпир ун пурнăçĕ мĕнле пуçланнине пĕлме пултарни.

Мĕнле майпа Петербурга лекнĕ-ха Петр Егоров, вĕреннĕ, архитектор пулса тăнă? Ăнсăртран пулса тухнă темелле. Пĕчĕк ача чухнех, паллă мар лару-тăрура, вăл Пĕрремĕш Петĕр патшан çывăх çыннин, артиллери генерал-майорĕн Егор Леонтьевич Дадиани кнеçĕн çемйине лекет.

24 çула çитиччен пурăннă Петр кнеç килĕнче. Кунта вăл пуçласа «ӳнерлĕхпе» туслашнă. Ӳкерме, живопиçе, архитектура никĕсĕсене хăнăхса пынă. Ахăртнех кнеç чĕререн юратнă чăваш ачине, ăна усрав ача вырăнне хурса пăхса çитĕнтернĕ. Ятне хуни çеç мар, вăл ăна малтанхи пĕлӳ илме, архитектура шкулне кĕме те пулăшнă. Çав вăхăтра кнеç çырăвĕсĕр «чăваш ачине» йышăну экзаменĕн çывăхне те ярас çук. Пирĕн паллă ентеш хăйĕн хушаматне хресна ашшĕн ятĕнчен илнĕ.

Дадиани кнеçĕн çывăх çыннисем хушшинче питĕ паллă «ăсчах патшан», Арчил (грузинсен мухтавлă поэт-патши) тăванĕн VI Вахтангăн ывăлĕсем – Бакар, Вахушти тата Георгий Багратионисем те пулнă. Вĕсене час-часах «нумай вĕренекенскерсем» тенĕ. Вĕсенчен кашниех грузинсен культурине çеç мар, вырăс культурине те пысăк пайта хывнă. Бакар кĕнеке пичетлес енĕпе ĕçленĕ, Вахушти (Грузин географи институчĕ халĕ ун ячĕпе хисепленет) хăйĕн Раççейре кăна мар, Францире те тухнă ăслăлăх ĕçĕсемпе палăрнă. Георгий çут ĕçе хӳтĕленĕ, Мускав университетне 1000 тенкĕ парса пулăшнă. Ку вăл питĕ сумлă парне, ăна вырăс интеллегенцийĕ хапăлласа кĕтсе илнĕ.

1750-мĕш çулсенче Петр Егоров Петербургра Бакар Багратионин çемйинче пурăннă. Ахăртнех, вăл ун чухнех живопиçе пĕлнĕ пулас. Документсем çирĕплетнĕ тăрăх 1750 çулта Егорова «Грузи патшин ывăлĕнчен Бакартан» Опера çуртĕнче живопись ĕçĕсене пурнăçлама илсе кайнă, çав çурта патша хушнипе тунă. Тен, шăпах çавăнта, Егоров каярахпа, вĕренме кĕрсен, хăй çырнă тăрăх, ăна «архитектурăна вĕренес шухăш канăç паман».

Петр Егоровăн çамрăклăхĕнчи ăс-хакăл лару-тăравĕ ӳнер пултарулăхне аталантарма, нумай енĕпе пĕлӳ илме, кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен пиçĕхсе çитме пулăшнă. Малтанхи пурнăçĕнче те, çамрăклăхри пекех, ăна ырă та сапăр çынсем пулăшса тăнă, искусство çулĕпе утма хавхалантарнă.

1755 çулта Петр Егоров Петербургăн Çурт-йĕр канцелярийĕ çумĕнчи архитектура шкулне вĕренме кĕрет. Вăл ун чухне ятарлă пĕлӳ паракан чи лайăх вĕренӳ заведенийĕ шутланнă (каярахпа ун никĕсĕ çинче «Виçĕ чаплă ӳнер Академине» уçнă).

Малтан Егоров чаплă вырăс архитекторĕ, Неван гранит çыранĕсене тунă тесе шутлакан А. Волков (1717–1790) патĕнче, унтан чаплă Ф.Б. Растрелли патĕнче вĕреннĕ. Вăл вунă çул питĕ ăста архитекторăн Ж.Б. Вален-Деламотăн пултарулăхне çывăхран сăнаса тăнă. Лешĕ Раççейре чи малтан классицизм стилĕпе усă курнă (1759–1769 çулсенче Çурт-йĕр канцелярийĕнче ĕçленĕ). Çакă ӳнер вăрттăнлăхĕсене алла илме пулăшнă ĕнтĕ çамрăк Егорова.

Çурт-йĕр канцелярийĕнче (кайран – Кантур) – çĕршыври чи паллă, император килĕн саккасăсене пурнăçлакан строительство организацийĕнче вăтăр çул ытла ĕçленĕ вăл. Егорова çав вăхăтра чи паллă архитекторсемпе пĕр танах «прожектсем тума» явăçтарнă, императрица хайланă саккассемпе лартакан явапла çуртсене, сăмахран, Мрамор кермене хăпартма шаннă. Вăл чылай çул хушши Çурт-йĕр канцелярийĕ çумĕнчи архитектура шкулĕнчи аслă курсри çамрăксене вĕрентнĕ, «чертежсем хатĕрлесе тăнă», хальхи пек каласан, проект мастерскойне ертсе пынă. Документсенче кăтартнă тăрăх, вăл яланах «ыттисенчен чаплă ăстараххипе палăрнă», ăна пĕрмаях «чи кирлĕ, питĕ тимлесе хатĕрлемелли чертежсемпе» ĕçлеме шаннă.

1760-мĕш çулсен пуçламăшĕнче тин çеç патша вырăнне йышăннă II Кĕтерне Пярну хулинче пурăнакансене хысна укçатенкипе чиркӳ лартса пама шантарнă. 1763 çулта çав чиркӳ проектне хатĕрлеме Петр Егорова хушнă.

Пярну хулинчи Таса Турă Амăшĕн Успени чиркĕвĕ (каярахпа ăна Кĕтерне патша чиркĕвĕ теме тытăннă) – Петр Егоровăн пĕрремĕш ĕçе пулнине пĕлетпĕр.

1765 çулхи пуш уйăхĕнче императрица чиркӳ проектне «чи çуллĕ шайра тĕрĕсленĕ», ăна питĕ килĕшнĕ çав проект, вăл Балтика тăрăхĕнчи мĕн пур православи храмĕсене ун тĕслĕхĕпе туса лартма хушнă. «Пярну тĕслĕхĕпе» Ригăри паллă Петропавловскри собора, çавăн пекех Тартупа Курессааре (халĕ Кингисепп) хулисенче православи храмĕсене туса лартнă. Кĕтерне патша чиркĕвĕ паян кун та хулари чи илемлĕ архитектура палăкĕ шутланать, ăна патшалăх сыхласа тăрать.

1774 çулта II Кĕтерне патша Раççейре хĕрарăмсен пĕрремĕш вĕренӳ заведенийĕсене – Ырă ăруран тухнă хĕрсен институтне (ăна валли Смольнăй мăнастирĕн темиçе корпусне уйăрса панă) тата Мещен хĕрĕсен училищине уçма шут тытать. Мĕн пур документсенче кăтартнă тăрăх, Петр Егоров 1765–1766 çулсенче училище çурт-йĕрĕсене тума хутшăннă.

Училище проекчĕн авторĕ кам пулни халиччен те паллă мар, мĕншĕн тесен чертежсем тупăнаман. Строительствăна Ю.М. Фельтен ертсе пынă, ахăртнех проектăн малтанхи вариантне вăл тунă пулас. Анчах çав проекта йышăнман, 1765 çулта çĕнĕ вариант тăвас тĕлĕшпе васкавлă ĕçлеме пикеннĕ, вăл икĕ çул тăсăлнă.

Императрица пуçарнă, пирĕн ентеш те хутшăннă тепĕр «ĕç» шăпи те кăсăклă. 1768 çулхи çуркунне II Кĕтерне патша хăй юратакан Г.Г. Орлов графа парнелемешкĕн «тав çурчĕ» Мрамор кермен (архитекторĕ А. Ринальди) лартма шут тытать. Кермене кĕмелли мрамор пусман чертежĕсĕр пуçне ун ытти чертежĕсене тупайман. Ахăртнех, архитектурăпа хытах аппаланнă императрица ун эскизне хăй ӳкерсе панă пулас.

Анчах та пĕрремĕш варианта ĕçре усă курма йышăнман. Юпа уйăхĕнче М.И. Мордвинов генерал-инженер хăй патне Мрамор кермен тунă çĕре Петр Егорова яма ыйтать, документра (1769 çулхи нарăсăн 2-мĕшĕнче çырнă) кăтартнă тăрăх, унăн «архитектурăна пĕлнипе çыхăннă тивĕçĕсене» пурнăçламалла пулать. Егоров 1768 çулхи юпа уйăхĕнче стройкăна пынă. Çав уйăхрах проекта улăштарма тытăнаççĕ: «пур енĕпе те çĕнетсе урăхлатаççĕ». Документсем çирĕплетнĕ тăрăх, малалла пĕрре кăна мар улшăну кĕртнĕ. 1770 çулхи çулла кăна модель тăвас ĕçе вĕçне çитернĕ. 1770 çулхи утă уйăхĕнче ăна императрица «çӳллĕ шайра пăхса тухнă», ырланă. Кермен тăвас ĕçе тытăннă.

Проектпа ĕçленĕ тапхăрта (1768–1770) «мрамор çуртпа» çыхăннă документсенче керменĕн пĕртен-пĕр авторĕ тесе шутланă Ринальди ячĕ пачах та тĕл пулмасть. 1771 çулхи кĕркунне кăна, проекта вĕçлесен тин, документсенче пуçласа курăнать ун ячĕ. Ринальди интерьерăн чаплă ăстаçи пулнă. Мрамор кермен интерьерĕ ун чухне чăннипех те тĕлĕнтернĕ, хăйĕн илемĕпе, капăрлăхĕпе тыткăнланă. Ун пирки тĕплĕн çырса кăтартнисем пирĕн вăхăтченех упраннă. Ринальди лартнă çуртсен чаплă «сăн-сăпачĕпе çепĕç илемĕ» вăл «барокко формисем еннелле» туртăннине кăтартать,

ӑна кермен интерьерӗнче ҫеҫ палӑртнӑ, унта «барокко форми» хуҫаланнӑ (уйрӑммӑн илсен – керменӗн тухӑҫ фасадӗнче), анчах ку тулашри сивлек фасадсемпе, вӗсенче классика туртӑмӗ яр уҫҫӑн курӑннипе нимӗн чухлӗ те килӗшсе тӑмасть.

Ҫакна тӗпчевҫӗсем тахҫанах асӑрханӑ, вӗсем хытах иккӗленнӗ, Мрамор кермен архитектури пӗр еверлӗ марринчен тӗлӗннӗ, кермен тӑвас ӗҫе Ринальди кӑна мар, урӑх архитектор та хутшӑннӑ тесе калаҫнӑ.

Ҫав «урӑх архитектор» Петр Егоров пулман-ши? Вӑл пӗрпӗччен кӑна Мрамор кермене туса лартнӑ вун ҫичӗ ҫул хушши (1768–1785) унта ӗҫленӗ-ҫке. Кермен проектне хатӗрленӗ тапхӑрта (1765–1770) архиври документсенче пӗр архитектор – Егоров ячӗ ҫеҫ тӗл пулать. Керменӗн тулаш фасачӗсене классицизм стилӗпе купаланӑ. Егоров лартнӑ ытти ҫурт-йӗрсенче шӑпах ҫавӑн пек. Петр Егоровӑн «Аслӑ императрица тӗрӗслесе тухнӑ» проекчӗ тӑрӑх Мрамор керменӗн Хӗсмет ҫуртне туса лартнӑ (1780–1788). Ӑна Марс уйӗ тата Кермен ҫыранӗ енчен тимӗр картапа ҫыхӑнтарнӑ, ӑна та Егоров проекчӗпе тунӑ – ун ӳкерчӗкӗ Ҫуллахи Сад картипе пӗр еверлех. Хӗсмет ҫурчӗ Мрамор керменпе пӗр комплексра – вӗсен адресӗ те пӗрле: Кермен ҫыранӗ, 6-мӗш ҫурт. Ӑнсӑртран мар ӗнтӗ XVIII ӗмӗрхи архитектурӑна питӗ лайӑх пӗлекен И.Э. Грабарь Мрамор кермене те, Ҫуллахи сад картине те пӗр архитектор ӑсталанӑ тесе ҫирӗплетнӗ, ҫапла шутланӑ: вӗсем «пӗр почеркпа», «архитектурӑри пӗр шухӑшпа» палӑрса тӑраҫҫӗ.

Егоров Мрамор кермене лартма хутшӑннине ҫирӗплетсе паракан тата тепӗр тӗслӗх. XVIII ӗмӗрте уйрӑмах тава тивӗҫлӗ ӗҫсем тунӑшӑн ҫеҫ сайра-хутра «ранга» пысӑклатнӑ. Мрамор кермен туса лартмалли ӑраха кайнӑ тертлӗ ӗҫе ӑнаҫлӑн вӗҫленишӗн Егорова укҫан преми кӑна мар, икӗ хутчен мухтав аттестачӗ парса, ӑна чин енӗпе наградӑлама сӗннӗ. 1768 ҫулта Правительство Сеначӗн йышӑнӑвӗпе ӑна «двор канашҫи» пулма ҫирӗплетнӗ. Ранг табелӗпе килӗшӳллӗн, 7-мӗш класлӑ граждан чинӗ ҫар подполковникӗпе тан пулнӑ, дворян ятне панӑ.

1770 ҫулхи ҫулла II Кӗтерне патша Ҫуллахи сада Нева енчен «хапхаллӑ тимӗр картапа» пӳлсе хума «указ кӑларнӑ». Картан пӗрремӗш проекчӗн (вӑл икӗ ҫул вӑйра тӑнӑ) авторӗ И.Б. Фок архитектор (1741–1807) тесе шутламалла. 1772 ҫулхи авӑн уйӑхӗнче «ҫав картапа ӗҫleме» Петр Егорова явӑҫтарнӑ.

Çуллахи сад картин чертежĕсем 11 лист, 1772–1784 çулсемпе çыхăннăскерсем халиччен упранса юлнă (вĕсенчен иккĕшне Фельтен алă пуснă). Карта проектне тума хутшăннă тесе шутлани архитекторсен (Фельтен, Егоров тата Фок) графика почеркĕ вĕсем хатĕрленĕ чăн-чăн чертежсенче палăрнă. Вĕсенчен иккĕшне, 1778 çулпа çыхăннăскерсене (картан çӳлти эрешĕн варианчĕсем) Фок тунă. Анчах вĕсемпе усă курма йышăнман. Картан ытти тăхăр чертежне Егоровăн графика манерĕпе тунă, вăл унăн ытти чертежĕсемпе паллă (Иордан павильон, Кĕтерне тата Раштав чиркĕвĕн иконостасĕ тата ыттисем).

Çакна уйрăммăн палăртмалла: Егоров графики хăйне евĕрлĕ, ун пекки урăх çук. Хăйĕн проекчĕсене вăл ирĕклĕ живопись меслечĕпе тунă, чылай детале акварельпе хитрен сăрланă. Хăшпĕр чертежсем çав тери илемлĕ, вĕсене уйрăм ӳнер хайлавĕ теме пулать. Сăмахран, Çуллахи сад картин кĕçĕн хапхине ун çумĕнчи решетке сыпăкĕсене кăтартакан чертежа (1772 çул) гравюрăна аса илтерекен мелпе пурнăçланă – çамрăк чухне Егоров ӳнерçĕ пулма хатĕрленнĕ, рисованипе живописçе вĕреннĕ.

Проекта хатĕрлес енĕпе Егоров пĕтĕмпе вуникĕ çул (1772–1784) хушши ĕçленĕ. Майĕпен, çул хыççăн çул тăрăшса, вăл проектăн пĕрремĕш вариантне (1772) йăлтах урăхлатнă, классицизм ыйтăвĕсене тивĕçтерекен уçамлă, капăр, ырă ӳкерчĕк патнелле çывхартнă. Çуллахи сад картин вышкайсăр илемĕ, унăн пур енлĕ çыпăçулăхĕ, çирĕп те капăр решеткесен, тĕлĕнмелле виçелĕхĕ çакна пĕлтереççĕ: кунашкал чаплă проекта мĕн пуçласа вĕçне çитиччене пур ĕçе те пĕр архитектор ăсĕ кăна çуртама пултарнă. Çирĕппĕнех ун пек архитектор Петр Егоров çеç пулнă теме май килет. Çуллахи сад картин проекчĕн вариантне вăл тунă, строительство ĕçĕсене ертсе пынă, автор надзорне пурнăçласа тăнă.

Анчах та яланах тенĕ пекех, Çуллахи сад авторĕсем иккĕн – Ю.М. Фельтенпа П.Е. Егоров архитекторсем пулнă теççĕ. Ку ĕçе Фельтен мĕнле хутшăннă-ха? Çакă паллă, 1770–1771 çулсенче вăл Фок проекчĕ тăрăх смета тунă, ун çинчен «çырса кăтартнă», пулас картан чул пайĕсен калăпăшне палăртнă. 1774 çулта вара проекта, çав шутра картан чул пайĕсене улăштарнă май, сметăпа ун çинчен «çырса кăтартнине» Егоровпа «ăста чулçă» Насонов пĕтĕмпех çĕнетсе урăхлатнă.

Фельтен Çуллахи сад картине тăвас ĕçе хутшăннине архиври документсемпе те, графика материалĕсемпе те çирĕплетсе памаççĕ. Карта тăвассипе çыхăннă питĕ нумай архив докуменчĕ ун ятне пĕрре те асăнман. Вăл Çуллахи сад проекчĕн пĕр чертежне те туман. Карта тăвас ĕçе Фельтен çурт-йĕр кантурĕн тĕп архитекторĕнче ĕçленĕ пирки кăна хутшăннă, хăйĕн аллинчи мĕнпур çурт-йĕре сăнаса тăрасси унăн тивĕçĕ шутланнă.

Çуллахи сад картан чăн-чăн авторне палăртас енĕпе йăнăшасси XVIII ĕмĕр вĕçĕнче пуçланнă пулас. Ю.М. Фельтен ун чухне ӳнер академийĕн директорĕнче ĕçленĕ. Çакнашкал пысăк вырăнта лараканскере императрица та, çав вăхăтри ятлă-сумлă çынсенчен пĕри, ӳнер академийĕн президенчĕ тата Çурт-йĕр кантурĕн директорĕ И.И. Бецкий те яланах хӳтĕлесе пурăннă. 1788 çулта хăйĕн формуляр (хĕсмет) списокне Фельтен хăй çырса пачĕ, унта вăл «хăй пурнăçланă» проектсен шутне «тимĕр решеткене» те кĕртсе хунă, анчах çакă вăл Фельтен автор пулнине туллин çирĕплетсе параймасть. Кунпа пĕрлех Петр Егоровăн 1786 çулхи пуш уйăхĕн 9-мĕшĕнче карта тăвас ĕç малалла тăсăлнă вăхăтра формуляр спискĕ те сыхланса юлнă. Ăна Егоров хăй мар, официаллă çын – Иван Харитонов протоколист хатĕрленĕ, унта çапла çырнă: «... Иртнĕ 1788 çулта артиллери полковникĕ, кайран генерал-инженер пулнă Михаил Иванович Мордвинов ыйтнипе Мрамор çурт тунă çĕре янă, вăл унта 1786 çулччен ĕçленĕ, çурт-йĕр кантурĕн ведомствинче вара Раштав слободинче чул чиркӳ лартнă тата Çуллахи садăн Нева çыранĕнчи решеткене тунă чухне çеç шутланнă».

Çак формуляр спискĕнче, Мрамор керменпе Çуллахи сад картине асăннисĕр пуçне, Раштав чиркĕвне те асăннă, ăна тăвас ĕç (1779–1786) Петр Егоровшăн уйрăмах хаклă пулнă, мĕншĕн тесен чиркĕве çурт-йĕр кантурĕн слободинче пурăнакансене валли лартнă. Егоров хăй те 6-мĕш Раштав урамĕнче пурăннă. 1776 çулта унччен паллă живописец И.Я. Вишняков пурăннă çурта сутăн илнĕ вăл, çав çуртра унпа пĕрле тăванĕсем, тусĕсем, нумай çул пĕрле ĕçлекенсем пурăннă. Чиркĕве тăрăшса купаланă, ăна слободари Алексей Антроповăн пĕр тăван Иванпа Алексей Бельскисен живопись ĕçĕсемпе илемлетнĕ. Егоров Бельскисен тăванĕн хĕрне качча илнĕ.

Шел, 1933 çулта Раштав чиркĕвне ишсе антарнă.

1788 çулхи утă уйăхĕнче çурт-йĕр кантурĕн тĕп архитекторне М.Е. Старова тата П.Е. Егорова çапла хушнă: вĕсен «кашнин хăйĕн проекчĕпе çурт-йĕрĕн корпусĕсене тумалла». «Çурт-йĕр кантурĕн çĕнĕ апартаменчĕсен» проекчĕ Петр Егоров пурнăçĕнчи юлашки ĕç шутланнă. 1789 çулхи ака уйăхĕн вĕçĕнче пикенсе ĕçленĕ-ха вăл. Çурт-йĕр кантурĕн документчĕсенче пурнăçланă ĕçсем пирки вăл çырнă «репортсем» тăтăшах тĕл пулаççĕ, 1789 çулхи çу уйăхĕн 12-мĕшĕнче вара Егоров вилсе кайнă. «Госпитальте вилнĕ», – çапла кĕскен çырса хунă çурт-йĕр кантурĕн протоколĕнче.

XVIII ĕмĕрте ӳнерçĕ шăпи çăмăл пулман. Чапа тухнă Растрелли те вилес умĕн çапла çырса хăварнă: «Раççейре архитектор хĕсмечĕ палăрмаллах йывăр...». Ӳнерçĕне талантне шута илсе мар, мĕнле чинран тухнине шута илсе хакланă. Егоров çинчен калакан документсем пурте çакна палăртнипе пуçланаççĕ: «чăвашран тухнă çын». Ăнсăртран мар ку. Çавнашкал «япăх» сийрен тухнă çын талант пуррипе çеç мар, Ломоносов калама юратнă пек, хăй çине тăрса вăй хунипе кăна палăрма пултарнă.

Егоровăн упранса юлнă питĕ хитре, сас паллисене кăштах çавралатса çырнă автографĕсем вăл лайăх пĕлӳ илнине кăтартса параççĕ. Петр Егоров «питĕ сапăр çын», «яланах ырă ĕçсемпе» тата «ĕçлеме çав тери юратнипе» палăрнă çын тесе типпĕн пĕлтерекен архив документчĕсем те вăл кăмăллă этем пулнине ăнлантараççĕ.

2001 çулхи çĕртме уйăхĕн 22-мĕшĕнче общественность чаплă архитектор çуралнăранпа 270 çул çитнине паллă турĕ. Шупашкарта «Петр Егоров архитектор тата ку чухнехи зодчество ыйтăвĕсем» темăпа ăслăлăхпа практика конференцийĕ иртнĕ, «Чăвашгражданпроект» институт çывăхĕнчи скверта пирĕн чаплă ентеш палăкне уçнă.

Хăйĕн пултарулăхĕнче ăслăлăхăн чи çӳллĕ шайне çĕкленнĕ П. Егоров. Унăн пурнăçĕ, вăл яланах – юлашки кунччченех тăрăшса ĕçлени «тӳрĕ чунлă çынсем хисеплеме тивĕçлĕ» паха тĕслĕх.

*Э.Ф. Кузнецова*